# Алексей Анисимович АСЛАМАС – пианист, дирижер, вĕрентекен

## (12.05.1959 – 08.02.2016)



«Алексей музыкăна анне варĕнчех илтнĕ пулас... Музыкăпа сывланă эпир, музыкăпа пурăннă. Кашни каç тенĕ пекех атте пластинкăсем янăраттаратчĕ – Григ, Бетховенăн 9-мĕш симфонийĕ, «Игорь княç» опера, «Щелкунчик» балет кĕвви, «Борис Годунов» опера тата ытти те. Пĕчĕк Алюш шав: «Радамес изменил...» – тесе юрласа çÿретчĕ /«Аида» оперăри ари/. Фортепиано умĕнчи атте ăна час-час чĕрçи çине лартатчĕ те тĕрлĕ импровизаци калама тытăнатчĕ. Ячĕ пирки çавнашкал истори: анне ăна Леонид ятлă хурасшăн пулнă, атте вара ят-хушамат виçĕ «А» сасăран пуçланмалла тесе Алексей партарнă: Алексей Анисимович Асламас.

Пирĕн пысăках мар хваттер – ăратнен хайне майлă кăк йăви – яланах музыкăпа тулса тăнă, мĕн чухлĕ концерт янăранă унта...» /аппăшĕ – Татьяна Асламас – асаилĕвĕнчен/.

Алексей Асламас Шупашкарта, музыкантсен çемйинче çуралнă. Ашшĕ – паллă чăваш композиторĕ Анисим Васильевич Асламас, амăшĕ, Мария Васильевна – юрăçă, Чăваш АССР ташăпа юрă патшалăх ансамблĕнче ĕçленĕ, Чăваш телевиденийĕ йĕркеленнĕ хыççăн сасă режиссерĕнче вăй хунă.

Пуçламăш музыка пĕлĕвне Алексей С. Максимов ячĕллĕ ача-пăча музыка шкулĕнче, Т.Г. Рафаилова класĕнче илнĕ. Кайран Шупашкарти Ф. Павлов ячĕллĕ музыка училищинче, Л.А. Борисова патĕнче вĕреннĕ. Пĕр хушă Чулхулари музыка училищинче теори уйрăмĕнче те ăс пухнă. Ывăлĕ композитор пуласса ĕмĕтленнĕ ашшĕ. 1979 çулта Алексей Асламас Хусанти Р.Г. Жиганов ячĕллĕ консерваторине вĕренме кĕнĕ.

«Хусанта вăл хăйĕн пулас мăшăрĕпе паллашнă. Инна Игоревна уншăн пурнăçри чи пысăк телейччĕ – çутă ăс-хакăл, ылтăн чĕре. Пирĕн хваттертех пурăнатчĕç вĕсем: çамрăк кин тата икĕ пĕчĕк арçын ача – Алексейпе Антон. Аттепе анне питĕ юрататчĕç вĕсене. Кайран та тете çемйипе кашни çул – хĕлле е çулла – пирĕн пата, ăратне кăк йăвине килсех тăратчĕ. Аслашшĕ çуралнă кун тĕлне мăнукĕсем концерт йĕркелетчĕç. Анисим Асламас хайлавĕсем, урăх композиторсен кĕввисем янăратчĕç. Кĕçĕн мăнукĕ Антон юрлатчĕ...» /Татьяна Асламас асаилĕвĕнчен/.

Хусанти консерваторинчен вĕренсе тухнă хыççăн Алексей Шупашкарти музыка училищинче концертмейстер пулса ĕçлет. Салтака кайса килсен каллех çак училищерех тата Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче вăй хурать.

1988 çулта пĕлĕвне, ăсталăхне ÿстерес тесе Алексей Асламас Ленинградри Н.А. Римский-Корсаков ячĕллĕ консерваторине, оперăпа симфони дирижерĕсен факультетне вĕренме кĕрет. Вĕреннĕ чухнех вăл пĕр тапхăр Чăваш камера оркестрĕн тата Архангельскри камера оркестрĕн дирижерĕ пулса ĕçлет.

1993 çулта Ленинградри консерваторирен вĕренсе тухсан Алексей Асламас Чăваш Енрен йыхрав кĕтсе пурăннă. Анчах икĕ консерватори пĕтернĕ çын, пултаруллă пианист, дирижер тăван республикăна кирлĕ пулман. Чăваш Республикин культура министерстви те сасă паман. Вара вăл çемйипех Чехине тухса каять. Мĕн вăхăтсăр виличченех Теплице тата Брно хулисенчи консерваторисенче вĕрентет, Усти-над-Лабем хулинчи оперăпа балет театрĕнче, Брно наци театрĕнче ĕçлет. Тĕрлĕ камера ансамблĕсенче пианист пулать, мăшăрĕпе пĕрле фортепьяно дуэчĕ йĕркелесе халăх умне тухать. Тĕнчери тĕрлĕ проектсенче «Камерата Брно» оркестрне ертсе пырать. Европăри, Раççейри юрăçсемпе ĕçлет. Сĕрме купăсçă аслă ывăлĕпе пĕрле тĕнче тата вырăс музыка классикине, Анисим Асламасăн хайлавĕсене калать.

Алексей Асламас ачасене музыкăна вĕрентме юратнă. Унăн хăйĕн вĕрентÿ меслечĕ те пулнă: кĕвĕ саккунĕсене математикăпа çыхăнтарса ăнлантарса пама тăрăшнă. Хăйĕн ачисене те музыка тĕнчине ăнланма-юратма хăнăхтарнă. Асли, Алексей, паллă музыкант, икĕ ушкăнта – классика квартетĕнче тата джаз-рок квартетĕнче сĕрме купăс калать. Европа тата Ази çĕршывĕсене гастроле нумай çÿрет. Кĕçĕнни, Антон, аслашшĕ çулĕпе кайнă – кĕвĕ çырать. Алексей Асламас ывăлĕсем Чехи музыкантсен хушшинче паллă çынсем. Вĕсем чехла, нимĕçле, акăлчанла ирĕклĕ калаçаççĕ, тĕнче гражданинĕсем темелле.

Чех музыкантсем, юрăçисем Алексей Анисимович Асламаса питĕ хисепленĕ, юратнă. Музыкант çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрălни вĕсемшĕн пысăк хуйхă пулса тăнă. Вăл ĕçленĕ консерватори çине хăйсен йăлипе траур паллине – хура ялав çакнă. Кăçал çу уйăхĕн 10-мĕшĕнче чăваш халăхĕн чаплă ывăлне, тĕнчери паллă музыканта асăнса Чехире, Брно консерваторинче пысăк концерт лартма палăрнă. Унта хутшăнма тĕнчипе паллă, ятлă-сумлă чылай музыкант, юрăçă кăмăл тунă.

Алексей Асламасăн пултарулăх планĕсем анлăччĕ: ашшĕн сцена çинче янăраман хайлавĕсемпе ĕçлесшĕнччĕ, Петĕр Хусанкай сăввисемпе Анисим Васильевич çырнă юрăсене DVD дискесемпе кăларасшăнччĕ, ывăлĕсемпе тата мăшăрĕпе çĕнĕ концертсем хатĕрлетчĕ, музыкăна вĕрентес ĕçе те малалла аталантарасшăнччĕ.

Асламас ăратни – музыка çемйи. Тен, хăçан та пулин вĕсен Шупашкарти хваттерĕ, ăратнен кăк йăви /Ленин проспекчĕ, 39-мĕш çурт/ – Асламассен музейĕ пулĕ.

**А. ХУСАНКАЙ, С. ЖУРАВЛЕВ**

**Ярăм авторĕсем, «Самант» редакцийĕ Татьяна Анисимовна Асламаса сăнÿкерчĕксемпе тивĕçтернĕшĕн чĕререн тав тăваççĕ.**